Кузьмина Ю.Е., Антонова И.Н.

# Электронла урокси

Трак гимназийе
2005 .

Программа на:Microsoft Office PowerPoint 2003

# Рецензентсем:

- Вӗрентӳ институчӗн чăваш чӗлхипе литература кафедри
- Н.Е. Тимофеева, Элӗк районӗнчи Йăлкăшри вăтам шкул вӗрентӳçи.

Рецензентсем:

# Тупмалли

- 1. В. Элпи «Аппапа пĕрле» - 6 кл.
- 2. Л. Сарине «Кукамай» - 6 кл.
- 3. Никита Бичурин – 10 кл.
- 4. Çеçпĕлĕн таса юратăвĕ – 10 кл.
- 5. А. Артемьев çырнă «Салампи» повесть – 11 кл.
- 6. Илпек Микулайĕ çырнă «Хура çăкăр» роман – 11 кл
- 7. Чăваш ачине халăх педагогикине тĕпе хурса вĕрентесси: ĕнер, паян, ыран (килти вулав) – 7 кл.
- 8. Ю. Скворцов «Ултăк» калав – 7 кл.
- 9. Я. Г. Ухсай пурнăçĕпе пултарулăхĕ – 11 кл.
- 10. Ю. Скворцов çырнă «Сăваплă вут» повесть (килти вулав) – 11 кл.
- 11. П. Хусанкай çырнă «Таня» поэма – 7 кл.

# Ку́ртём

Элетронлă уроксене вăтам шкулăн 6,7,10,11 класěсенче чăваш литературине вěрентекен учительсем валли хатěрленě.
Çěнě технологипе усă курма сěннě 9 пěтěмлетў тата 2 килти вулав урокне программăра вěрентме палăртнă темăсене шута илсе йěркеленě. Схемăсемпе, ўкерчěксемпе пуянлатнă слайдсем вěрентекенсемпе вěренекенсем хушшинче ыйту-хурав ирттерме пулăшаççě, ачасен тавра курăмне, асра хăвараслăхне ўстереççě. Кашни урок хыççăнах панă тест материалěсем ěçе чылай çăмăллатаççě, вěренекенсен пěлў шайне кěске вăхăтра хаклама пулăшаççě.
Çакăн пек уроксем ачасене сăнама, тěпчеме, чи кирлине уйăрса илме, илемлěхе туйма, тěрлě пулăмсене хак пама, уçăмлă та сăнарлă, логика тěлěшěнчен çыхăнуллă шухăшлама, çамрăксен чěлхине пуянлатаççě.
Электронлă кěнекери материалсем çěнě пěлў пěлтерěшлě те, тěрлě ыйту (проблема) хускатаççě, илемлěх туйăмне (эстетикăна) аталантараççě. Уроксене паянхи шкул ачин кăмăл-сипет ыйтăвěсене шута илсе хатěрленě.
Проекторпа ěçлесен уроксем пахалăхлăрах пулěç. Пур енлěн, тěплěн шухăшласа хатěрленě электронлă уроксем вěрентў ěçне çěнěлле йěркелес тěлěшпе сире пысăк пулăшу парасса шанатпăр.

Ю. Е. Кузьмина,
И. Н. Антоновна

## Урок теми: Никита Яковлевич Бичурин (1777-1853)



Н. Я. Бичурин (Иакинф)

**Ҫӗршыв чапне ҫӗклес тесе ӗҫлерӗм…**

*Н.Я. Бичурин*

**Иакинф… Мӗнле пуп ку?**

**Хӑй гитара калать, ташлать, юрлать,**

**Тарӑн шухӑшлӑ калаҫать…**

*А.С. Пушкин, вырӑссен аслӑ поэчӗ.*

- Ачалӑхӗ
- Хусанти тӗн семинарийӗ (академийӗ)
- Иркутск. Тобольск
- Ылтарайми Китай
- РАҪҪЕЕ ТАВРӐННИ
- Наукӑри ӗҫӗ-хӗлӗ
- Бичурин тусӗсем
- Юлашки ҫулӗсем
- Тест

# Хусан **(1788-1799)**



Вид г. Казани. Гравюра В. Турина. 1830-е гг.

Казанская духовная семинария.






**1788 çулта Никитана Хусанти тĕн семинарине куçарнă.**

**1790 çулта вăл латин чĕлхин аслă класĕнче, 1793 çулта риторика класĕнче вĕренни паллă. Иакинф истори, географии, философи тата чĕлхе наукисене питĕ юратнă, вырăсла, акăлчанла, чăвашла, нимĕçле, французла, латинла, грекла, китайла, монголла тата ытти чĕлхесемпе вулама-калаçма кăна мар, çырма та пултарнă. Академире вĕреннĕ çулсенче сăвăсем, мухтав юррисем çырма пуçланă. 1797 çулта семинарирен академи туса хураççĕ.**

**1799 ç. академирен питĕ лайах паллăсемпе вĕренсе тухнă. Бичурина çавăнтах информатори учитĕльне хăвараççĕ.**

**1800 çулта ăна грамматика класне вĕренттереççĕ. Çав çулхи июлĕн 18-мĕшĕнче çирĕм виççĕри учитель манаха тухать, Иакинф ят илет. Манахăн нихăçан та çемье çавăрма юраман, ĕмĕрлĕхех хăйĕн пурнăçне чиркӳпе çыхăнтармалла пулнă.**

# I АЧАЛĂХĔПЕ ÇАМРĂКЛĂХĔ (1777-1787çç.)

**Никита Яковлевич Бичурин 1777 çулхи çурла уйăхĕн 29-мĕшĕнче (çĕнĕ стильпе авăн уиăхĕн 9-мĕшĕнче) халĕ Шупашкар районне кĕрекен Шемшер чиркĕвĕнче тиечукра ĕçленĕ Яков Данилов чăваш кил-йышĕнче çуралнă. 1779 çулта Я.Данилов çемйи Шĕнерпуçне(вырăсла Бичурино) куçса каять, унта кил пуçĕ иккĕмĕш священикре ĕçлеме тытăнать. Ял çыннисемпе пĕрле вăл утă çулнă, нимесене çӳренĕ, уявсенче кĕрекесенче юрлама та именмен. Çемье пысăк мар çуртра пурăннă, урăх хуралтă таврашĕ пулман.**

**Никита çемьери 5 ачаран чи асли пулнă. Амăшĕ-Акулина Степановна - вырăс. Михитта тенĕ ăна ялти пĕрле выляса ӳснĕ ачасем, чăвашла сутса ярса калаçаканскере. Никита ачаранах тĕрĕслĕхе тата ырă кăмăллăха хисеплесе çитĕннĕ, вăл мĕскĕнленме, аслисен умĕнче йăпăлтатма юратман. Ялти шкулта вĕреннĕ хыççăн Михиттăна ашшĕ Сĕве хулинчи Богородицки монастырь çумĕнчи нотăсем тăрăх юрлама вĕрентекен класа янă.**

# ИРКУТСК. ТОБОЛЬСК. 1802-1806çç.



Тобольск. С гравюры XVIII в.




1802 çулта Синад йышăнăвĕпе Н. Бичурин Иркутск хулине куçарнă, Вознесенски монастырь архимандричĕ тата Тĕн семинарийĕн ректорĕ туса хунă. Çамрăк манахсенчен (Иакинф ун чухне 24 çулта çеç пулнă) çавăн пек пысăк вырăна хăш-пĕрисене çеç ларткаланă; ку ăна Хусанти тĕн академийĕн пуçлăхесем хакланинчен килнĕ. Иркутскра Бичурин икĕ çула яхăн пурăннă. Кунта вăл «çылăха кĕнĕ» (Тобольскрипе Иркутскри государство архивĕсенчи документсенче кун пирки «допустил грехопадение» тенĕ.

Çакăншăн Синод Бичурина священнослужени (кĕлĕ) тутармалла мар тата архимандрит хĕресне çакса çуремелле мар тесе йышăннă, ăна монастыре ертсе пырассинчен, ректор пулса ĕçлессинчен хăтарнă тата консисторире те пулмалла мар туса хунă. Иакинф аттене Тобольскри Знаменски монастырне «ссылкăна» янă, пĕр паллă духовнăй çынна ăна сăнаса пурăнма хушнă. Кунта Бичурина Тобольскри тĕн семинаринче илемлĕ сăмах учителĕ пулма ирĕк панă. Вăл 1807 çулхи çуллаччен пурăннă.

# ЫТАРАЙМИ КИТАЙ **(1808-1821)**



Вид Северного подворья Российской духовной миссии в Пекине. 1850 г. Из альбома К. А. Скачкова.

Вид Пекинского православного монастыря и посольского двора. Изображено торжественное поднесение почетной доски доктору О. П. Войцеховскому. 1829 г.



**Тобольскри «ссылкăра» пурăнакан монаха Синодри пысăк та паллă Алевросий Подобедов çеç çăлса ирĕке кăларма, пысăк вырăн тупса пама пултарнă.**

**1807 çулта Бичурин Раççейрен 9-мĕш мисси пуçлăхĕ тата Пекинри Сретенски монастырь архимандричĕ пулса Китая тухса кайнă та вырăна çур çултан тин 1808 çулхи кăрлачра çитнĕ.**

**13 çул хушшинче Бичурин Китай чĕлхин пысăк словарьне китайла-вырăсла туса хатерлнĕ. Вал 19 пайлă 12 пин сăмахран тăнă. Кунсăр пуçне 4 томлă маньчужрла-китайла словарь çырнă. Н. Бичурин Пекинра туна ĕçсен иккĕмĕш пайне Китай, Монголи, Тибет историйĕпе географийĕ çинчен калакан кĕнекисенчен илсе куçарнă материалсем кĕреççĕ. Унтах вăл Китай çĕршывне географи енчен çырса кăтартнă «Дайцин-и-рун-чжи» ятлă 18 томлă произведенин пысăк пайне, 10 томла «Китай историне тата çак империе пăхăнса тăракан çĕрĕсен тĕплĕ географине» куçарнă.**

**Пекинра тунă ĕçсен 3-мĕш пайне Бичурин хăй çырнă произведенисем кĕреççĕ. Ку Шутра – «Описание Пекина с приложением плана сей столицы, снятого в 1817г.». Кунтах вăл Китай, Маньчжури, Монголи, Корея, Туркестан тата Тибет арçынĕсемпе хĕрарамĕсен тумтирĕн 45 ўкерчĕкне тунă. Вĕсемпе каярахпа «Записки о Монголии» ятлă кĕнекере усă курнă. Кунсăр пуçне сайра тĕл пулакан тата Китайри антикварнăй япаласем, интереслĕ сахал мар кĕнекесем пуçтарса хăйпе персе илсе килнĕ. Пуян библиотекине каярахпа Петербургра публичнăй библиотекăпа Ют çĕршыв ĕçĕсен министерствин департаментне панă.**

# РАÇÇЕЕ ТАВРĂННИ




**1821 çулта Иакинф архимандрит Пекинран Кяхтăна таврăннă. Петербургра Бичурина «Чиркӳ пурлăхне сутнăшăн» тата хăйне ирĕклĕ тыткаланăшăн духовнăй суд тепĕр хут архимандритран кăларнă, Ладога кӳллинчи Валаам утравĕ çинчи монастыре «ссылкăна» янă. Унта 1826 çулччен пурăннă, вăхăта ахаль ирттермен хăйĕн алçырăвĕсене тепĕр хут юсаса çырнă. Çавăн пек пултарулла çынна тĕрмере усрама юраманнине ăнланса илнĕ çынсем Бичурина ирĕке кăларма тăрăшаççĕ. Кĕçех ăна Ют çĕршыв ĕçĕсен министерствин Ази департаментĕнче куçаруçă пулма илсе каяççĕ. Хăйне ăна Петербургри Александр Невский мăнастырĕнче пĕр пӳлĕм (келья) параççĕ. Тĕрлĕрен хăтăлнă тĕпчевçĕ-писатель наукăпа литература ĕçне кӳлĕнет.**

# НАУКĂРИ ĔÇĔСЕМ (1822-1851çç)




Чи малтан Петербургра унăн «Ответы на вопросы о Китае» ятлă пĕчĕк кĕнеки пичетленсе тухнă. Çав çулах «Описание Тибета в нынешнем его состоянии», икĕ томлă «Записки о Монголии». Тепĕр çулне «Описание Пекина с приложением плана сей столицы, снятого в 1817г.». Ку произведение те французла, нимĕçле кăларнă. Кĕске хушăрах вуншар тĕпчев ĕçĕ пичетлет.1839 çулта «Китайская грамматика» кĕнекешĕн Раççейри наука Академийĕн Демидов ячĕллĕ премине чыслаççĕ. Вăл 4 хутчен пичетленсе тухнă. Демидов премине вăл 4 хутчен илет.






Н. Бичурин хăйĕн «Собрание сведений о народах, обитавших в Средней Азии в древние времена» ятлă ĕçне пичетлесе кăларса, истори наукине çĕнĕ материалсемпе пуянлатнă. «Собрание сведений о народах, обитавших в Средней Азии в древние времена» тĕпчев ĕçĕ вара паянхи ученăйсемшĕн те пысăк пуянлăх. Пичетлемен ĕçсем те нумай юлнă.

1829 çулта Бичурина Раççейри Наукăсен академийĕн член-корреспондентне суйланă. Ăна çавăн пекех Францири Ази обществин членне, Англири король обществин тата учĕнăйсен ытти организацийĕсен членне те суйлаççĕ. Бичурина 6 ĕçĕшĕн хаклă преми пана.

Бичурин хăйĕн библиотекинчен чылай кĕнекисене, алçырĕвĕсене, хăй ÿкернĕ картăсене Хусанти тĕн академин библиотекине парнеленĕ.



# ТУС-ЮЛТАШЁСЕМ

Бичурин нумайăшĕсемпе юлташлă пулнă. Чи çывăххисем – вырăс поэчĕ Александр Пушкин, Карл Брюллов художник, Николай Бестужев декабрист. А. С. Пушкинпа Бичурин туслăхĕ вунă çула яхăн тăсăлнă. Аслă поэт тусĕн ятне дневникĕнче, произведенийĕсенче асăнать. Унпа пĕрле Китай çĕршывне кайса килме пуçтарăнать, анчах патша ирĕк паманнипе çула тухаймасть.



Бичурин чăваш çĕрĕ-шывĕ çинчен хавхаланса каласа кăтартнине те Пушкин темиçе хутчен те илтнĕ, унпа пĕрле чăваша çитсе курма ĕмĕтленнĕ, анчах кашнинчех Бичуринăн май килмен. Каярахпа, 1833 çулта, Пушкин Чăваш çĕршывĕпе иртнĕ чухне Шĕнерпуçне кĕрсе тухать.



А. С. Пушкин урлах Н. Я. Бичурин декабристсемпе çывăх туслашать. Николай Бестужев декабрист патне Байкал леш енне ятарласа кайса килет. Бестужев хăйĕн ал-ура сăнчăрĕсенчен шăрçа ярăмĕ туптаса панă, асăнмалăх пысăк портрет ўкернĕ. Халĕ çав портрет Кяхта хулинче упранать.

# Юлашки çулесем (1821 – 1853çç)




Тĕрмерен хăтăлна хыççăн Н. Я. Бичурин тепĕр хут Иркутска, Улан-Удане, Кяхтăна çитсе килет. Кяхтăра китай чĕлхине вĕрентекен шкул уçать, пĕр хушă хăй те унта ачасене китай чĕлхине вĕрентсе пурăнать. Юлашки кунĕсене Бичурин Александр Невский мăнастырĕнче ирттерет. Вăл йывăр чирлесе вырăнпа чылай выртнă. Ун патне никама та кĕртмен, пăхса пурăнакан манахсем ăна таса мар, выçăллă-тутăллă усранă. Тĕпчевçĕ-писатале кунти некрополе пытарнă. Каярахпа юлташĕсем ун тăпри çине хура мрамор палăк лартнă. Ун çине китайла çапла çырса хунă: «Труженик ревностный и неудачник, свет он пролил на анналы истории».

# Тест

- 1. Бичуринǎн чǎн хушамачĕ?
- а) Яковлев; б) Данилов; в) Бичуринский
- 2. Никитǎсǎр пуçсǎр çемьере тата миçе ача пулнǎ?
- а) 1; б) 2; в) 4;
- 3. Никита вĕреннĕ тĕн академийĕ хǎш хулара вырнаçнǎ пулнǎ?
- а) Мускавра; б) Питĕрте; в) Хусанта;
- 4. Вĕренсе пĕтернĕ хыççǎн Бичурина ǎçта яраççĕ?
- а) Тĕн академийĕнчех хǎвараççĕ; б) Иркутска яраççĕ;
  - в) Китая тухса каять;
- 5. Иакинф архимандрит Китайра миçе çул пурǎннǎ?
- а) 13; б)14; в) 10;

- 6. Н. Бичурин хăйĕн хăш произведенине чăвашла çырнă?
- а) «Байкал» очерк; б) «Тĕлĕк» ода; в) «Паян эпир айла тайлатпăр»;
- 7. Асăннă хăш ĕçе Бичурин çырман?
- а) «Земледелие Китая»; б) «Сочинения, принадлежащие к грамматике чувашского языка»; в) «Описание Тибета»;
- 8. Тĕпчев ĕçĕнче пысăк ÿсĕмсем тунăшăн Раççейри наукăсен Академийĕ паракан Демидов ячĕллĕ премие Н.Я.Бичурин миçе хутчен илнĕ?
- а) 2; б) 7; в) 5;

# Усă курма сĕнне литература

- Н. Бичурин пултарулăхĕ çинчен:
  - Никита Бичурин (Иакинф). «Хыпар» кĕнеки, 23, 3№, Ш., 1997, авăн, 9.
  - Григорьев П. Г. Никита Яковлевич Бичурин. Ш., 1954.
  - Жизнь замечательных людей./Жизнь монаха Иакинфа Бичурина. М., 1997.
  - Родионов В. Г., Родионова Э. И. Чăваш литератури. Хрестомати. Ш., 2002. 16 – 30 ст.
  - Родионов В. Г. Чăваш литератури. Вĕренӳ кĕнеки. Ш., 2003. 29 – 33 ст.

ТЕМА: Валентина Элпи çырнă «Аппапа пĕрле» калав (*иккĕмĕш урок*).

ЭПИГРАФ: «Килĕштерсе ĕçленĕ ĕç пысăк усăллă - çакна пĕлсе тăрăр: ун пек ĕçе юратăр»

*И.Я. Яковлев.*

Ĕç çынна мухтава кăларать. (*Ваттисен сăмахĕ*).




**Урок тĕсĕ: хайлава вуласа тишкермелли хутăш урок.**

- **Килти ĕçе тĕрĕслесси.**
- **Текстпа малалла паллашасси.**
- **Канар-ха.**
- **Толя тĕрĕс турĕ – и?**
- **Танлаштару характеристики.**
- **Ĕç–пурнăç тыткăчи.**
- **Мĕнле ăнланмалла.**
- **Литература теорийĕ.**
- **Тест.**
- **Урока пĕтĕмлетни.**

Лидия Сарине çырнă «Кукамай» калав (пĕтĕмлетӳ урокĕ)

ЭПИГРАФ. Чыс – тупра, ăна мĕн виличчен упра.

Ватта сума сăвакан хăй те ватă пулакан.

(*Ваттисен сăмахĕ*).



Урок тĕсĕ: *хутăш урок*.

· Учитель сăмахĕ. «Кукамай» калава 73- мĕш страницăран малалла вулаççĕ

План туни.

Кану саманчĕ.

Словарь ĕçĕ.

· Вуланине мĕнле ăнланатăр.

· Кукамая сăнлани.

· Каçару ыйтмалли сăмахсем.

· Кукамай ролĕнчи артист.

· Вырăс тата чăваш литературинче çак темăпа çырнĕ ĕçсем.

· Тест.

· Урока пĕтĕмлетни.

· Киле ĕç.

**Урок теми:** *Çеçпĕлĕн таса юратăвĕ (Çеçпĕл Мишши А.П. Червякова патне янă çырусене тишкерни).*

- **Урок эпиграфĕ:** *«Вăл мана чăн- чăн юратупа, халĕ никам та çавăн пек юратма пултараймасла юратнă. Çапла юратма идеалла лайăх çынсем кăна пултарнă пулĕччĕç. Пирĕн ĕмĕрте ун йышшисем çукрах ĕнтĕ».*

  А. Червякова

*Если б в сердце тебя я не грел, не ласкал,*
*Ни за что б этих слов я тебе не сказал.*

А. Фет

# Урок тĕсĕ: хутăш урок

1. Урока йĕрекелесе пуçласси.
2. Çеçпĕл çинчен çырнă кĕнекесем. Юрий Сементер куçарса пичетленĕ «Чунăмçăм, çунатăмçăм» кĕнеке.
3. Теччĕ çулĕ – аслă çул!

- Кам-ха вăл Нуся… Анастасия Петровна?
- Çырусенчен илнĕ вырăнсене илемлĕ вуласси.

1. Мĕнле юрату ку?
2. Сăнарлăха курма вĕренер.
3. Философиллĕ тата абстрактлă сăмахсен вăрттăнлăхĕ.

- Этем – çут çанталăкăн пĕр пайĕ.
- Юратнă хĕрарма сăнлани?

1. Урока пĕтĕмлетни. Тест.
2. Киле ĕç.

## Урок теми: «А. Артемьев çырнă «Салампи» повесть.

Пĕтĕмлĕтӳ урокĕ.

*Урок эпиграфĕ: «Юратса кĕтме пĕлекенсем, шанчăка çухатманнисем – телейлĕ!»*



- Урок юхăмĕ:
- 1. А.Артемьевăн кун-çул кĕнеки.
- 2. Пултарулăх çăл куçĕ.
- 3. «Салампи» повесть - çамрăклăх çинчен çырнă хайлав.
- 4. Сюжет хывăмĕ.
- 5. «…Сана кĕтсе çунать чĕре»
- 6. Хĕрарăм – пурнăç тыткăчи.
- 7. Арçын пул та – çирĕп пул.
- 8. Повеçри сăнарлă чĕлхе.
- 9. Тест.
- 10. Урока пĕтĕмлетни.

# Илпек Микулайĕ çырнă «Хура çăкăр» роман

Пĕтĕмлетӳ урокĕ.



Эпиграф: Илпек Микулайĕн пултару çӳпçи чăваш чĕлхин сумлăхне çĕклекен пуплев çаврăнăшĕпе, çынлăхлă шухăшлав ретлĕхĕпе, çирĕп тĕллевлĕхĕпе хăй патне туртать, вулакана та, çыракана та пăлхантарать, ĕмĕр саккин сарлакăшне яваплăрах туйăмпа виçме хистет.
Юрий Сементер, чăваш халăх сăвăçи

Урок йĕрки

Ĕмĕр сакки сарлака (писатель кун-çулĕ).
Çыравçăн хушма ячĕсем. Халăх юратса вулакан произведенийĕсем.
«Хура çăкăр» - тĕнче умне тухнă сумлă роман.
Тĕп сăнарсен йăх аталанăвĕ.
Романри чăваш пурнăçĕн анлă панорами.
Хĕрарăмсен сăнарĕсем.
Танлаштару характеристики.
Юрату е… чун ыратăвĕ?
Литература теорийĕ.
Тест.

# Тема:«Чăваш ачине халăх педагогикине тĕпе хурса çитĕнтересси: ĕнер, паян, ыран».

*Урок эпиграфĕ:*

*Ялан ĕçре те, пурнăçра та аслă*
*Асаттесем – чунĕсемпе хитре.*
*Кирек ăçта кайсан та çирĕп ăслă*
*Пулма шелленĕ пĕчĕкрен пире.*
*Я. Ухсай.*

**План.**

1. **Чăваш ачисене ăса вĕрентессин мĕслечĕсем, мелĕсем, майĕсем.**
2. **Чăваш çемйи.**
3. **Ача çитĕннĕ чухнехи виçĕ ўсĕм.**
4. **Харпăр хăйне тытма вĕренмелли шкулсем, хутшăнусем.**
5. **Ĕç-пурнăç тыткăчи.**
6. **Ĕлĕк, паян, ыран ача – пăчана халăх педагогикине тĕпе хурса ўстерессин проэкчĕ.**
7. **Пĕтĕмлетў.**

# Урок теми: Ю.Скворцов çырнă «Ултăк» калав (пĕтĕмлетӳ урокĕ)

**Эпиграф:** *Кайăк хитре тĕкĕпе, этем ырă ăсĕпе*



***Урок тĕсĕ: хутăш урок.***

1. **Учитель сăмахĕ. Ултăк калава 194-мĕш страницăран вулани.**

- **Калавăн пĕтĕмĕшле планне туни.**

1. **Вăйă саманчĕ.**
2. **Словарь ĕçĕ.**

- **Володьăсен çемйи.**
- **Теори материалĕ.**

1. **Володьăпа Сашăн танлаштаруллă характеристики.**
2. **Вуланине мĕнле ăнлантăр? Сăнарлă сăмах.**
3. **Ула тăпа юрри.**
4. **Тест.**
5. **Урок пĕтĕмлетĕвĕ. Киле ĕç.**

.Г.Ухсай пурнăçĕпе пултарулăхĕ

**Эпиграф:**

*Тӳрĕ тытрăм эп хама,*
*Утрăм халăх çулĕпе.*

Я. Ухсай.



План

1. Я.Ухсай ачалăхĕпе вĕренĕвĕ.
2. Вăрçăчченхи ĕçĕ-хĕлĕ.
3. Тăван çĕр-шыв Аслă вăрçинче.
4. Вăрçă хыççăн.
5. Хайлавĕсем.
6. Хисеплĕ ятсем, наградăсем.
7. Хĕрĕсен аса илĕвĕсем
8. Тест.
9.Пĕтĕмлету.

# Урок теми: *Ю. Скворцовăн «Сăваплă вут» повеçĕ тăрăх йĕркеленĕ килти вулав урокĕ.*

***Эпиграф:***
***«Телей шыранă вĕсем иккĕш. Хăйсен ĕмĕрĕсене çитеймесĕрех пурнăç асапĕнче çунса кайнă, анчах кĕл пулман-сăваплă сылăша, сăваплă çутта куçнă…»***

***Произведенирен***

**Урок тĕсĕ: пĕтĕмлетӳ урокĕ**

**План**

**Прозаик çинчен.**
**- «Сăваплă вут» повесть.**
**- Произведени ячĕ.**
**- Повеçре сăнарланнă темăсем.**
**- Повеçри сăнарсем.**
**- «Телейлĕ каç» сыпăк тăрăх йĕркеленĕ сценка.**
**- Повеçе илемлĕх, аваллăх сĕмĕ кĕртекен сăмахсем, каларăшсем.**
**- Сарă тĕс çинчен.**
**- Эпикăлла драма.**
**- Тест.**
**- Пĕтĕмлетӳ.**

# Урок теми: П.Хусанкайăн «Таня» поэми(1-8 сыпăксем)

*Эпиграф:*

**Тăван çĕршыв чысĕшĕн пуçна ан шелле.**
**Тăван йăваран хакли нимĕн те çук.**
***Ваттисен сăмахĕ*.**

## Урок планĕ

- халăх поэчĕ П.Хусанкай
- Зоя çинчен çырнă Чăваш кĕнекесем
- Кам-ха вăл Таня?
- П.Я. Кулик аса илĕвĕ
- Текстпа ĕçлесси
- Словарь
- Ваттисен сăмахĕсем
- Таня портречĕ
- Таня – Тăван çĕршыв хĕрĕ
- Тест
- Пĕтĕмлетӳ.

# Тема: Николай Терентьев çырнă «Пушар лаши» трагкомеди.

Пĕтĕмлетӳ урокĕ.
Эпиграф: «Вăл ырăпа усал хушшине хăюллăн кĕрсе ырришĕн çине тăма, усала хирĕç кĕрешме вĕрентет».
А. Артемьев, чăваш халăх писателĕ

Çын çуралнă юратма, - Çавă аслă туйăма, Ĕçлесе те кĕрешсе, Халăхпа пĕрле ӳссе,
Хăй çĕршывĕнче тупма.

Г. Айхи, чăваш халăх поэчĕ.



- **УРОК ЙĔРКИ**:
1. «…Кунсем-çулсем, ăçталла вĕçетĕр? Кам хăвалать сире?”
2. Терентьев театрĕ.
3. Раççейри хуласенче.
- «Пушар лаши» трагикомеди.
1. Манас марччĕ нихăçан.
2. «Арçын вăл … пушар лаши пек»
3. Нуша витĕр тухса çирĕпленнĕ хĕрарăмсем.
4. Юрату теми.
5. Произведенири символсем.
6. Шухăшлатăн та шухăша каятăн.
- Артистсем тата вĕсем усă куракан сăмахсем
1. Тест (1, 2, 3).
2. Пĕтĕмлетӳ.